Иванов К.В. Вăранăр, тапранăр!; Юрăсем нумай илтнĕ эп хам çĕршывра; Ешĕл вăрман айккипе; Мăнтарăн та сынччĕ-çке : [сăвăсем] / К.В. Иванов // Сунтал. – 1940. - № 9. – С.7.

# К. В. ИВАНОВĂН ÇĔНĔ СĂВВИСЕМ*

## ВĂРАНĂР, ТАПРАНĂР!

Хура халăха ирĕке янă
Нарсăн вунтăххăрмĕш кунĕнче,
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ,—
Ак сире улпутсен ырлăхĕ!

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр,—
Малалла, малалла, малалла!

Хресченсем çĕрсĕр пит аптăраççĕ,
Улпутсем уншăн питĕ хавас.
Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме...

Вăран...

1906-мĕш çул, кĕркунне.

★

* * *

Юрăсем нумай илтнĕ эп хам çĕршывра,
Савнăç мар, усал хуйхă çинчен вăл.
Çавсенчен пĕр юрри тăрса юлчĕ пуçа,
Ĕçлекен хура халăх юрри вăл.

Эх, чукмарăм та, ух! тер,
Эх, ешĕлĕм те хăех кайĕ,—
Туртăпăр, туртăпăр та,
Ух! тер.

Акăлчан, чеескер, ĕçĕнче пулăшма,
Машина та машина тăвать вăл.
Пирĕн вырăс çынни ĕçлеме хĕн пулсан,
Чукмарне юрласа та ярать вăл.
Эх, чукмарăм та, ух! тер...

1906 ç., кĕркунне.

★

* * *

Ешĕл вăрман айккипе
Çырма юхать кĕрлесе;
Хĕвел çути шывĕпе
Вылять тĕрĕ тĕрлесе.
Таса çырма ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать.
Мĕнпур, мĕнпур çут тĕнче
Ташлать, сикет, савăнать...

★

* * *

Мăнтарăн та çынччĕ-çке,
Мăнтарăн та ыр курас
Чухне чăваш пĕтрĕ-çке!
Халлап пĕтрĕ... Чарăнас...

1906 ç., кĕркунне.

---

* Ку сăвăсемпе сыпăксене К. В Ивановăн упранса юлнă дневникĕнчен илнĕ. Вĕсем ку таранччен ниçта та пичетленмен. «Вăранăр, тапранăр!» тата «Юрăсем нумай илтнĕ эп хам çĕршывра» сăвăсене поэт вырăс халăх юррисем тăрăх çырма тăнă, анчах та çырса пĕтереймен. *Ред.*